Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 97 N (4666) | *1998 çулхи август (çурла) уйăхĕн 26-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Районта ТР Премьер-министрĕ пулчĕ

Августăн 21-мĕшĕнче районта ТР Премьер-министрĕ Рустам Нургалеевич Минниханов пулса курни çинчен пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Ăна Нурлат районĕнче нумайăшĕ кăсăкланчĕ. Чаплă хăна Нурлатпа паллашасси "Татнефтепром" ОАОн Зузеевăри нефтьпе газ кăларакан промыслинчен пуçланчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин тата "Татнефтепром" ОАО генеральнăй директорĕ Р.К.Зарипов халь 16 скважина ĕçлекен нефть промыслин малашне вĕсен шутне 300 çитерме май тата шухăш пуррине палăртса, унăн хальхи тата малашлăх пурнăçĕпе Премьера паллаштарчĕ, çакă кунта хăватлă битум завочĕ туни экономика тупăшĕ парассине çирĕплетет.



Р.Н.Минниханов строительство площадки çинче чарăнса тăрса, çак пысăк пĕлтерĕшлĕ объект, унта малашне çулсерен 60 пин тонна промышленность тата çул-йĕр битумĕ, 30 пин тонна мазут туса кăларма планлаççĕ, района çеç мар, республикăна пысăк усă парассине палăртрĕ, çавăнпа унăн хăватлăхне май пур таран хăвăртрах хута ямалла.





Р.Н.Минниханов Тĕрнеçри спирт завочĕпе уйрăмах кăсăкланчĕ, унта "Татспиртпром" производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорне Р.Р.Шайхутдинова чылай ыйту çине хуравлама тиврĕ. "Тĕрнеçри спирт завочĕ" патшалăх унитарлă предприятин пысăк малашлăхĕ пулнине палăртса, Премьер предприятие реконструкцилессине ноябрь уйăхĕнчен кая мар вĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ терĕ. Вăхăта вăраха тăсмасăр, пысăк пахалăхлă спирт туса кăларма тытăнмалла тата таса эрех туса кăлармалли линие оборудованилеме пуçăнмалла.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Нурлатра - ТР вĕрентӳ министрĕ

Иртнĕ шăматкун, августăн 22-мĕшĕнче, районта ТР вĕрентӳ министрĕ Фарис Фахразиевич Харисов пулчĕ. Вăл хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ф.С.Сибгатуллинпа тĕл пулчĕ. Кайран учительсен августри конференцине хутшăнчĕ тата тухса каларĕ. Министр Киклĕ, Кислев, Хумаел ялĕсенчи вăтам шкулсенче тата ача-пăча садĕнче пулчĕ. Вăл çаплах вĕрентӳпе воспитани паракан "Сказка" комплексра тата районти чи инçетри вĕрентӳ учрежденийĕсенчен пĕринче - Тăрнас ялĕнчи шкулта пулчĕ.

Ф.Ф.Харисов хулари 1296 вырăнлăх çĕнĕ шкула тата 99-мĕш номерлĕ ял хуçалăхĕпе професси училищин çуртне тунипе паллашрĕ.

*(Августри конференци çинчен тĕплĕн çырнă отчета çитес номерсенчен пĕринче вулăр)*

## Кĕрхи культурăсене вăхăтлă акмалла

### "Тухăç-98" пресс-центр пĕлтерет

Хальхи вăхăтра районти çĕр ĕçченĕсен умĕнче тăракан задачăсем хушшинче кĕрхи культурăсене хăвăртрах акса пĕтерессинчен кирлĕреххи çук пулĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районта çак ĕçе 13 пин гектар çинче пурнăçланă, ку вăл планпа палăртнин çурри ытла шутланать. Чăнах та, юлашки кун 1 пин гектар ытла акнă, чи кĕске сроксем иртнине шута илсен, ăна хăвăртлатма кирлине ăнланмалла ĕнтĕ. Халлĕхе пĕр хуçалăх кăна - кооперативсен "Родина" пĕрлешĕвĕ - ырашпа кĕрхи тулла палăртнă чухлĕ акнă. "Рассвет", "Сĕнче" тата "Игенче" ассоциацисем ыраша планланă чухлĕ акса пĕтернĕпе пĕрех, "Заветы Ильича", "Кондурча" хуçалăхсем - кĕрхи тулла. "Комбайн", "Тĕрнеç", "Черемшан", Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем, РСУн тата нефтебазăн хушма хуçалăхĕсем кĕрхи ака планне çуррине те тултарман-ха.

Çав вăхăтрах кăçалхи тухăçа пухса кĕртессине те хăвăртлатмалла. Ĕнерхи кун тĕлне пăрçана 300 гектара яхăн лаптăк çинче çапмалла пулнă пулсан, çурхи тулла мĕнпур лаптăксен чĕрĕк пайĕ çинчен çеç пухса илнĕ-ха. Юлашки кунсенче "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕнче, "Заветы Ильича", "Тан", "Урняк", Хафизов ячĕпе хисепленекен тата ытти хăш-пĕр ассоциацисенче çак ĕçе чылай хăвăртлатнă, нефтебазăн хушма хуçалăхĕнче, "Игенче", "Родина" тата ытти хăш-пĕр хуçалăхсенче çак ĕç хуллен пырать. Тулла пĕтĕмĕшле пухса кĕртнин шучĕпе Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăх малта пырать, "Заветы Ильича", "Кондурча", "Тан", Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацисенче те çак ĕçсем япăх мар.

Тавар кредичĕ шучĕпе тырă парассине илсен, ĕнерхи кун тĕлне "Сĕнче" хуçалăх 450 тонна тулă панă, çакă района панă мĕнпур тухăçăн пĕрре вуннăмĕш пайĕ шутланать. "Алгаран" 560 тонна ытла тулă илсе килнĕ, урпа тĕлĕшпе парăма тӳлесе татасси Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Рассвет" хуçалăхсен те кăшт кăна юлнă.

Юлашки тулă сахал панă, ку енĕпе чи пысăк парăмçăсем те - Синдряков ячĕпе хисепленекен тата Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем - васкамаççĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлессинче кукурузăна силослăх хывассине ытларах тимлĕх уйăраççĕ. Юлашки кунсенче "Алга", Кузнецов ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен,"Тĕрнеç", Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацисем, нефтебазăн хушма хуçалăхĕ çак ĕçе хăвăртлатнă, Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Дуслык", "Комбайн", "Родина", "Сĕнче", "Черемшан" ассоциацисенче, РСУн хушма хуçалăхĕнче вара силос пĕр тонна та хатĕрлемен-ха.

## Ярмăркка шавларĕ

Учительсен август уйăхĕнчи канашлăвĕ кунĕ вĕренекенсен ярмăрккине ирттересси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ.

Пахчаçимĕç йӳнĕ, нумай пулни тавар туянакансене илĕртрĕ. Ассортимент, чăнах та, пуянччĕ: пахчаçимĕç, улма-çырла, варенисем, тăварланă çимĕçсем, вĕренекенсем ĕç урокĕсенче çĕленĕ япаласем - ача-пăча кĕписем, вырăн хатĕрĕсем. Çамрăк "сутуçăсем" хăйсен ларекĕсене, киоскĕсене, суту-илӳ палаткисене тĕрлĕрен капăрлатнă, тавар туянакансем вара вĕсем тивĕçтернин пысăк культурине те палăртрĕç.

Ятарлă комисси чи пуян та тĕрлĕ продукци илсе килнĕ çĕнтерӳçĕсене палăртрĕ. Вăтам шкулсем хушшинче I вырăн Анат Нурлатри шкул йышăнчĕ, вăл 3425 тенкĕлĕх продукци сутнă. Иккĕмĕш вырăнта - хулари 3-мĕш номерлĕ шкул (2982), виççĕмĕшĕнче - 4-мĕш номерлĕ шкул (2906). Пуçламăш шкулсем хушшинче вырăнсене çапла пайларĕç: пĕрремĕш вырăна - Лачакари, иккĕмĕшне - Вăтам Хăмăшлăри, виççĕмĕшне Ерепьелĕнчи шкул йышăнчĕ. Шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенчен чи лайăххисем - "Ивушка", Вăтам Хăмăшлăри тата Тĕкĕрмелĕнчи ача сачĕсем.

# Районта ТР Премьер-министрĕ пулчĕ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Унтан делегаци район хуçалăхĕсене курса çÿрерĕ, "Агрокультура" кооператив-ра, "Надежда" агрофирмăра, "Киклĕ" ассоциацире выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинче тăкаксене хирĕçле механизма хута ярас ĕçсемпе паллашрĕ, шведсен ĕне сумалли "Альфа-Лаваль" установкин аналогĕпе уйрăмах кăсăкланчĕ, ăна Нурлатри машинăсем тăвакан завод туса кăларма тытăнĕ, хуçалăхсенчи сĕте пастеризацилемелли установкăсене ырларĕ. Сыснасем ĕрчетекен "Нурлат" агрофирмăра, продукцие хăйех ĕçлесе хатĕрлесе сутаканскерте, хуçасем нимĕçсен оборудованиллĕ цех уçма хатĕрленни çинчен пĕлтерчĕç, малашне çак цехра конкуренциллĕ 50 ытла тĕрлĕ продукци туса кăларма тытăнĕç. Кунта Премьер-министра "Татмясопром" холдинг компанийĕн президенчĕ А.Г.Булатов кĕтсе илчĕ.





Тури Нурлатра ăратлă лашасен ферминче пулнă хыççăн Премьер-министр "Кейссене" ĕçре курчĕ. Çакăнтах Рустам Нургалеевич кантăклă кабинăна хăпарса ют çĕршыв техникине тĕрĕслесе пăхрĕ. Ăна çÿрессин лайăх енĕсене хаклаunion tata экономика енчен усăллă пулнине пĕлсе, вăл пирĕн "КамАЗра" та çакăн пек комбайнсем кăларма тытăнмалли çинчен каларĕ.

Каярах хисеплĕ хăна Нурлат сахăр завочĕн ТЭЦне тата диффузи цехне юсасси мĕнле пынипе паллашрĕ. Заводăн производство вăйне ÿстерекен, çыхăнса тăракан икĕ узела юсаса çĕнетме финанссем тупас çул-йĕрсенчен вăл акцисемпе ĕçлессине палăртрĕ. Вăл заводăн производство фончĕсем тата хăватлăхĕ ÿснĕ май хушма акцисем кăларассине тата вĕсене тупăшлă вырнаçтарассине шута илнĕ. Нурлат элеваторĕн çĕнĕ арманĕнче Премьера хамăрăн çăнăхран пĕçернĕ çăкăрпа хăналарĕç, юлашкинчен вăл Нурлат аэропортне курса çÿрерĕ.

"Нурлатра пит ĕ нумай тунă, пысăк пуçарусем те пур", - курса çÿренĕ хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетÿ турĕ Минниханов. Çак пуçарусене ырласа, вăл чи малтан Зузеевăри битум заводне туса пĕтерме тата сахăр заводне юсаса çĕнетме финанс енчен пулăшма сăмах пачĕ.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Н.АЗИЗОВ** ÿкерчĕкĕсем.

---

*Пирĕн хăна*

# "Çав куна кĕтетĕп..."

*Редакци пултаруллă çынсемпе, уйрăмах ентешсемпе тĕл пулма яланах хавас. Хальхинче вĕсем иккĕннĕ - "Нурлы як" ентешлĕх правленийĕн председателĕ Ильдар Камалов тата Талгат Галиуллин. Талгат Набиевич - Хусанти патшалăх университетĕнчи тутар филологийĕпе историйĕн тата хĕвелтухăç чĕлхисен факультечĕн деканĕ, тутар чĕлхипе литературин вĕрентÿ методикин кафедрин заведующийĕ, пирĕн республикăн наука тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Раççейри гуманитари Академийĕн академикĕ, Гаяз Исхак ячĕллĕ премин лауреачĕ, паллă ученăй, литература тĕпчевçи, çыравçă тата критик. "Хисеп палли" орденпа наградăланăскершĕн çак çул тата тепĕр паллă пулăмпа çыхăннă - ăна пĕтĕм тĕнчери Кул Гали ячĕллĕ премин лауреачĕ ятне панă.*



***- Чи малтан Сире ентешсен ятĕнчен 60 çулхи юбилей ячĕпе тата çак хисеплĕ премипе панипе саламлас тетпĕр. Çак икĕ паллă пулăм тÿр килни сирĕн пултарулăх вăйĕ иксĕлменни çинчен пĕлтерет пулĕ...***

- Саламланăшăн тавах сире, ĕçсене пăрахма шутламастăп-ха. Çак кунсенче пирĕн университета вĕренме кĕмелли экзаменсем вĕçленчĕç, конкурс пысăкчĕ. Кăçал 100 çын пирĕн студентсем пулса тăчĕç. Экзаменсене ăнăçлă тытнă абитуриентсем хушшинче Нурлат районĕнчи ачасем, уйрăммăн илсен, Хумаелĕнчен, Кăчăканлăран тата Нурлатран пулни савăнтарать.

***- Талгат Набиевич, вулакансене сирĕн творчество ĕçĕ кăсăклантарать...***

- Кул Гали ячĕллĕ премие "Йывăрлăх" тата "Вăхăт ачисем" кĕнекесемшĕн пачĕç. "Мирас" журналăн июль уйăхĕнчи номерĕнче манăн çичĕ произведени пичетленнĕ, вĕсене пĕр ят панă "Тăван тавралăх повеçĕсем". Тĕп геройсем - манăн ентешсем, вĕсен хушшинче эсир пĕлекеннисем те пур.

***- Çак темăна суйласа илни эсир тăван çĕршĕн тунсăхланине пĕлтерет-и?***

- Çапла. Ватăлнăçем тăван вырăнсене туртать вĕт. Çак повеçсене эпĕ ентешĕмсене халаллярăм.

***- Халĕ курма килтĕр-и?***

- Манăн тăван Кăчăканлă ялĕнче анне, тăвансем пурăнаççĕ. Кунта килсен ман чун-чĕре ăшăнать, кăмăл çĕкленет. Хамăн юбилее те ентешсемпе пĕрле палăртас терĕм. Администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин çакна ырларĕ, мероприятисене сентябрĕн 11-мĕшĕнче - Кăчăканлăра, сентябрĕн 12-мĕшĕнче 18 сехетре Нурлатри культура çуртĕнче ирттерме калаçса татăлнă. Юбилей уявĕнче республикăри паллă писательсем, литература тĕпчевçисем, искусство ĕçченĕсем пулĕç. Эпĕ вара хама ентешсем хушшинче питĕ телейлĕ туйăп.

***- Юбилей районта кăна иртмест пулĕ?***

- Елабугари пединститут манăн шăпамра пысăк вырăн йышăнать - çавăнпа çак хулара та тĕлпулусем ирттерме планланă.

Октябрь уйăхĕнче вара юбилее халалланă каç Г.Камал ячĕллĕ Академи театрĕнче пулĕ. Манăн творчество планĕсем пысăк, ĕçлеме вăй та, кăмăл та пур. Тăван тавралăхпа çыхăну тата та çирĕпленессе шанатăп.

***- Çакна илтме питĕ кăмăллă. Пирĕн вулакансем тĕлпулăва хаваспах пуçтарăнасса шанатпăр. Тепре тĕл пуличчен.***

- Тавтапуç. Эпĕ хам та çав куна чăтăмсăррăн кĕтетĕп.

**С.НУРУЛЛИНА**
**калаçнă.**

---

Кăçалхи вĕренÿ çулĕнчен районти мĕнпур шкулсенчи 9,10,11-мĕш классенче вĕренекенсем çĕнĕ предмет - ОВС вĕренĕç. ОВС - çар службин никĕсĕсем. Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан учрежденисенче вĕренекенсемшĕн вĕренÿ программине НВП (пуçламăш çар хатĕрленĕвĕ) тĕпе хурса, "Пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсем" курс йĕркеленĕ.

Çак предмета вĕренни аслă классенче вĕренекенсене çар службине тĕлне хатĕрленме, ачасен хăйсен сывлăхне çирĕплетме, мĕн те пулин пулас пулсан хăйсен пурнăçне сыхласа хăварма пулăшĕ.

## Çĕнĕ предмет - ОВС

Предмета 4 уйрăм кĕртнĕ: патшалăх оборонин никĕсĕсем; граждан оборони, медицина пĕлĕвĕн тата этемĕн сывлăх культурин никĕсĕсем; ÿт-пĕве çирĕплетес тĕлĕшпе хатĕрленни. Медицина пĕлĕвĕн никĕсĕсен урокĕсем яшсемпе хĕрсемшĕн пĕрле иртĕç, арлăх воспитанийĕ вара - уйрăм.

Çĕнĕ дисциплинăна НВП тата ОБЖ предмечĕсене вĕрентнисемех вĕрентĕç. Пирĕн районта опытлă çар ертÿçисем пур. Кусем вĕсем - Н.А.Ханнанов (2-мĕш номерлĕ шкул), А.И.Абрамов (3-мĕш номерлĕ шкул), Н.Н.Яковлев (1-мĕш номерлĕ шкул). Ялсенчи шкулсенче хатĕрленнĕ, ăста преподавательсем ĕçлеççĕ. Кусем - А.Х.Садретдинов (Тури Нурлат), Н.Н.Багаев (Мамăк), И.В.Андаров (Бикулово) тата ыттисем.

Шкулсенче çар ĕçĕсене вĕрентекенсене перекен тирсем, чарăну полосисем тата ыттине тăвас тĕлĕшпе пысăк вăй хума тÿр килĕ, çаплах çарпа патриотла воспитани парассине лайăхлатмалла - шкул музейĕсен, çар мухтавĕн пÿлĕмне. Ку ĕçе планпа, тĕллевлĕ пурнăçламалла.

**А.НАБИУЛЛИН,**
**РОО методисчĕ.**

# Литература страници

## Шурă ташă

Шурă ташă кĕвви янăрарĕ,
Вăл часах чĕрене тыткăнларĕ.
Эп чĕнетĕп сана ташлама,
Çак ташша манпала пуçлама.

Пит ачашшăн мана ыталатăн,
Куçăмран тинкерсе тем калатăн,
Çаврăнатпăр хитрен ташăра,
Сана çеç эп куратăп умра.

Шурă ташă пире паллаштарчĕ,
Кĕввипе ĕмĕре çыхăнтарчĕ.
Тыткăнра, тыткăнра чĕресем,
Ташăра çывăхланчĕç чунсем.

**Галина КĔМĔЛ.**

## Икĕ чун

*Кун-çул тени вăл - шăтăк урапа,*
*Иртмест пĕр çухатусăр, ыратусăр.*
*Утман эс пĕрмаях яка çулпа -*
*Çухалнисем пулнах сан, ырă тусăм.*
*Пулнах çав, пулнă... Халĕ вĕсене*
*Манра тупмашкăн ĕмĕтленетĕн мар-и?*
*Чун-чĕрене ачашшăн кăтăкларăн.*
*Чăр-чăр пăхайрăн ăшшăн ман енне,*
*Ман хамăн та çĕтни-пĕтни нумай,*
*Çавна тупасшăн эп сахал-и çунтăм?*
*Санран вара савса сăнанă май,*
*Тахçан хам пĕлнĕ пеккинех*
*пуль куртăм.*
*Пĕр ырă кун - хĕвеллĕ çутă*
*ир -*
*Вăрантăмăр ак иккĕн*
*çума-çумăн:*
*Çухатнинех-ши тупрăмăр*
*эпир,*
*Çĕнни-ши сиплĕ пулчĕ икĕ*
*чуншăн?*



***Н.МАРТЫНОВ.***

## Икĕ михĕ

Тырă вырма тухас умĕн Ларка Иванĕ юлашки 4 михĕ туллине миххе тултарчĕ те армана шурă çăнăх авăртма тухса кайрĕ. Арманта çын лăк тулличчĕ, çавăнпа та килне часах таврăнаймарĕ, каç пулсан тин çитрĕ. Килĕнче ăна куç илмесĕр кĕтрĕç. Кумăшсем вĕсене "ача яшкине" икĕ хутчен пырса чĕннĕ иккен, анчах Иван кум çук та çук. Арăмĕ, Минке ятлăскер, тем те шухăшларĕ. Мĕншĕн вăрах тăрать-ши? Чирлесе ўкмерĕ-ши? Çуран армана тухса утма та хатĕрччĕ арăмĕ, çав вăхăтра Иван каптăртаттарса хапхи умне çитсе чарăнчĕ. Минке чупса тухрĕ те тўрех: "Мĕн пулчĕ, Иван? Ма вăрах тăтăн?" - хыпаланса ыйтрĕ.

- Нимĕн те пулман, арманта çын нумайччĕ, черет час çитмерĕ, - хуравларĕ Иван.

- Ача яшкине каймалла, кумасем икĕ хутчен килсе чĕнчĕç.

- Юрĕ, кайăпăр, - терĕ хуçа.

Çăнăхне пушатмарĕç, лав çинчех хăварчĕç. Çăвăнчĕç, тумланчĕç те хăнана тухса уттарчĕç. Кўршĕ хĕрарăмĕ Пăлтăр Пăлакийĕ пĕлесшĕн çунчĕ: "Иван çăнăх авăртсах килчĕ-ши? Кайса килем-ха." Иван-сем патне çитсен, пăхать - пўртне питĕрнĕ, картиш варринче, лав çинче шурă михĕсем выртаççĕ. Михĕсенчен тутлă шăршă кĕрсе тăрать. "Эх, ку пĕр миххи мана пулсан, тахçанччен пурăнаттăм, - шухăшларĕ Пăлтăр Пăлакийĕ. - Чим-ха, хăйсем çук, мĕн килет те мĕн пулать, пĕр миххине çаклатса каям-ха."

Тĕреклĕ хĕрарăм, çурăм хыçне пĕр миххине çавăрса хучĕ те хыçалти хапхаран килнелле лаплаттарчĕ. Ĕмĕчĕ пĕр михĕпе тăранмарĕ, теприне те илме тухса кайрĕ. Çапла икĕ миххине те ларне пушатрĕ, михĕсене лайăх шаккаса чĕркерĕ те Кушак Ваççисен пахчи патне кайса пăрахрĕ.

Ахаль каламан пуль çав ваттисем: тăлăх хĕрарăм тăхăр хĕртен ирттерет тесе. Хуçасем юрла-юрла, ташла-ташла менельник пăлартрĕç, çăнăхĕ çинчен аса та илмерĕç. Çухатăвне ирхине тин асăрхарĕç. Ларка Иванĕ пĕççине шарт! çапрĕ, пуçне кăтăр-кăтăр хыçрĕ. Ку хыпар яла çиçĕм пек сарăлчĕ, Ларка Иванне çаратнă, пĕр япала хăварман, шавларĕç ял çыннисем. Часах Кушак Ваççи пахчи çумĕнчен михĕсем те тупрĕç. Ăна милици допрос тума тытăнчĕ. Эхер те эпĕ вăрланă пулсан, михĕсене хам пахча çумне пытарман пулăттăм, вĕсене кирпĕч çыхса шыва кайса янă пулăттăм, терĕ Ваççа. Килне кайса пăхрĕç, нимле çăнăх та тупмарĕç. Çапла вăрра тупаймарĕç. Кўршĕри Пăлтăр Пăлакийĕ хĕл каçиччен сăмси пытаниччен çыртса шур кулачă çисе пурăнчĕ.

**Н.ВАСИЛЬЕВ.**

## Кулăш кушелĕ

Тухтăр:

- Сирĕн упăшкăра шăплăх тата канлĕх кирлĕ. Акă, çывăрмалли эмел илме рецепт.

- Хăçан ĕçтерес ăна?

- Э-э, çук. Эмелĕ сире валли.

* * *

- Эсĕ яшка пĕçерме пĕлетĕн-и-ха, кинĕм?

- Пĕлетĕп.

- Мĕн кирлĕ тутлă пултăр тесен?

- Кăмăллă хуняма, выçă упăшка.

* * *

- Сирĕн кунта вăрламаççĕ-и?

- Çук.

- Апла пулсан мĕншĕн алăк патĕнче пăшал пур?

- Вăт, çавăнпа вăрламаççĕ те.

* **Халăх кĕввипе**

## Йăлăнмăр

**юрă**

Тавах сире, атте-анне,
Çуратса ўстернĕшĕн.
Манмастăпах эп ĕмĕрне
Пурăнма вĕрентнĕшĕн.

Итлемесен, вăрçнă та пуль -
Пул, тесе, çын евĕрлĕ.
Чирлесессĕн тăкнă куççуль,
Чир-чĕре сирсе вĕрнĕ.

Хăш-пĕр чух эп кўрентернĕ
Сивĕ сăмахпа Сире.
Йăлăнатăп темĕн тĕрлĕ -
Каçарăр леш тĕнчере.

Пурăннă чух атте-анне
Пулăр вĕсемпе çепĕç, -
Каçарттарма çылăхсене
Йăлăнмăр кайран тин çеç.

**Хĕв. САВГАЧЕВ.**

## Опера

*Калав*

Çут çанталăкăн хăйĕн ĕçĕ: ирхине вăл çутă кăвак, кăнтăрла йăлтăр-ялтăр, çап-çутă тумпа, каç енне кайсан ерипен-ерипен, васкамасăр хура кĕпине тăхăнать. Ку унăн ĕмĕрхи йăли, ăна никам та улăштараймĕ, улăштарас тесен те пултараймĕ. Вара вăл çынсене те (каç кўлĕм) кăштах улталать, куçне хĕскелесе илет те, такампа вылянă пек, хăй айăпне туйса, çынсене савăнтарас, хуйхăртас мар тесе каллех пин-пин тĕспе ялкăшать, - хăй тĕллĕн калаçса, Маюк колхоз ĕне ферминчи ĕçне вĕçленĕ хыççăн йăрт-ярт утса, килне таврăнать. Çанталăк пăсăласшăн пулмалла. Вăхăт-вăхăт тўпене сиксе мĕлтлетекен, йăлтăртатакан çăлтăрсене таçтан шуса тухнă пĕлĕт таткисем хупăрлаççĕ. Хĕр кил умне çитсе тăнине те туймарĕ. Васкамалла - çке унăн, палăртнă вăхăта (Ванюкпа калаçса татăлнă-çке) клуба çитмелле. Амăшĕ хĕрне ăшшăн кĕтсе илчĕ, тарават пулчĕ, васкасах сĕтел çине хатĕрле пуçларĕ. Ку Маюка тата хавхалантарчĕ. Салтăнчĕ, çăвăнчĕ, кап-кап хыпкаласа апатланнă пек турĕ те çипуçне улăштарма хăйĕн пўлĕмне чăмрĕ.

Çурма саслăн хăйĕн юратнă юррине ĕнĕрлесе, Маюк трюмо умĕнче юсанать, хура кăвак кĕпи хăй çинче мĕнлерех ларнине тĕрĕслет.

Хитре ларать-ши кĕпем? - пĕрре трюмо патне пырса, тепре унран кăшт инçерех чакса, пăшăлтатать пике. Чăнах, кĕпине ним енчен те тиркеймĕн - хăйĕн йăрăс пўне тата та йăрăсрах кăтартать.

- Ылтăн алкасем çакам-ха. Ванюк парни-çке, - шут тытрĕ Маюк. Вара шифоньер патне йăпăртатса пычĕ те хаклă парнине хăлхисенчен çаклатрĕ. - Акă пулчĕ те. Питĕ аван. Клуба кайма та юрать, - пĕтĕмлетрĕ хĕр.

Утас пулсан - пăрчăкан пек йăпăртатать, чупас пулсан - çил пек вĕçет, юратас пулсан - вут пек çунтарать, теççĕ чăвашсем Маюк евĕрлĕ хĕре. Йăнăшмаççĕ пуль вĕсем. Мĕн калăн - Маюк вара ĕçре те, канура та вăрвар. Мĕне тăраççĕ хĕрĕн куçĕсем! тарăн, тунсăхлă та савăнăçлă, кăвар пек пĕçертекен кăвак куçсем унăн.

Ырăран та ырă халĕ Маюка, чун-чĕри шăнăçайми савăнăçпа тулнă, чĕри тикĕссĕн тапать, илĕртўллĕ куçĕсенче - кĕтни, тĕмсĕлни, пулас тĕлпулăвăн савăнăçĕ.

Кĕçĕр пулмалли тăван ялĕмĕрĕнче пулманччĕха. Яла пĕрремĕш хут опера артисчĕсем килнĕ-çке. Вĕсен асамлă пултарулăхĕпе ял ĕçченĕсем пĕрремĕш хут паллашаççĕ вĕт. Тата чун савнипе - Ванюкпа та тĕл пулмалла. Ăна вăл çунатлантарать, хĕпĕртеттерет, чĕрине вирлĕн шаккаттарать.

Сасартăк тул енчен чўречене такам шакăртаттарчĕ. Пĕрре, иккĕ... Унтан хăйăлти саспа калаçни те илтĕнчĕ. Маюк каркăçăн хĕррине кăшт çĕклерĕ те пичĕпе сивĕ кĕленче çумне йăпшăнчĕ.

- Петĕр мучи, эсир вĕт, - ферма хуралçине палларĕ хĕр. - Мĕн пулнă-ши? Маюка темĕн пăшăрхантарчĕ, çан-çурăмĕ те теме сиссе сăрлатрĕ, аллисем усăнчĕç, урисем те тăр-тăр чĕтресе илчĕç. - Хĕвелпипе мĕн те пулин пулчĕ-ши? Вăл çак кунсенче йыш хушмаллаччĕ вĕт.

Çенĕкре ура сассисем илтĕнчĕç, чăш-чаш турĕ. Петĕр мучи кăçаттисене шăпăрпа шăлса юртан тасатать пулмалла. Пўрт алăкĕ чĕриклетрĕ. Петĕр мучи Маюк амăшне сывлăх сунчĕ те васкасах сăмахне тăкса ячĕ:

- Хĕрĕм, Хĕвелпие тем пулчĕ. Çавăнпа сан патна кăлтăртатса çитрĕм. Пуçтарăн. Кайрăмăр.

- Эпĕ те çапла шутларăм. - Хĕрĕн уяври пек хаваслă сăмахĕ таçта кайса çĕтрĕ, пуçĕ усăнчĕ, савăнăçпа çиçсе тăракан куçĕсем тĕксĕмленчĕç.

- Ферма пуçлăхĕ кўршĕ ялта пурăнакан выльăх тухтăрĕ патне лашапа вĕçтерчĕ. Мĕнле çитсе килĕ? Аташса ан кайтăрччĕ. Çил-тăман хускалчĕ-çке. Тулашать, ахăрать, юра вĕçтерет. 5-6 утăмран ним те курăнмасть. Атя, пуçтарăн, - васкатрĕ хĕре Петĕр мучи.

Маюк уяв çипуçне улăштарса ĕç тумне тăхăнчĕ.

- Анне, кам та пулин ман пата килсен, эпĕ фермăрине пĕлтер, - терĕ амăшне, вара пўртрен чупсах тухрĕ. Ун хыççăн Петĕр мучи те мĕшĕлтетрĕ.

. . .

Урамра куçа уçса пăхмалла мар çил-тăман алхасать. Çил ачисем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла вирхĕнеççĕ, пит-куçа юрпа сапаççĕ. Çутçанталăкăн чуна çўçентерекен симфонийĕ кĕрлет, унăн хăрушă шавĕ чĕрене пăчăртать. Утнă çĕре утса, упаленнĕ çĕре упаленсе Маюк ферма çурчĕсем патне çитрĕ-çитрех. Вăл ĕне фермине кĕрсенех Хĕвелпи патне ыткăнчĕ. Ĕне урисене тăсса пăрахнă, пашкаса сывлать, хутран-ситрен чĕтренсе илет.

Маюк хăйĕн рекордсменки умне чĕркуçленчĕ те ăна çурăмĕнчен çепĕççĕн аллипе шăла пуçларĕ, çупăрларĕ, Хĕвелпие хĕрхеннипе куçĕсем шывланчĕç.

**Н.ПАЙМУРАТОВ.**
**(Малалли пулать).**

**М.АЮПОВ:**

# КАШНИ ТĂВАТТĂМĔШ АВАРИРЕ ÇЫН ВИЛЕТ

**- Хĕрӳ тырçи тапхăрĕнче ГИБДД (ГАИ) хăйĕн ĕçне пĕтĕмпех çĕнĕрен йĕркелет, тет ГИБДД начальникĕ М.АЮПОВ. - Çĕнĕ тухăça сыхласа хăварас тĕллевпе мĕнпур хатĕрсемпе усă куратпăр. Тĕллевлĕ "Паутина", "Трактор" операцисем иртрететпĕр.**

**Çирĕпрех мерăсем йышăнни, ГИБДД сотрудникĕсем хăйсен тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлани районта çул çинче инкеке лекессин хисепне чакармалла, çул çинче йĕрке пулмалла пек, анчах... ГИБДД начальникĕпе М.В.Аюповпа иртерне пирĕн паянхи калаçу шăп çакăн çинчен.**

- Шел, районта çулпа çӳрессин хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕлĕшпе лару-тăру йывăр. Кăçалхи 7 уйăхра, пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан, инкексен, вилнин, сиен тӳснин хисепĕ темиçе хут ӳснĕ. Çул çинче инкеке лекнин кăтартăвĕ те районта пысăк: республикăра вăл 18 процент шутланать пулсан, районта - 25 процент. Урăхла каласан, кашни тăваттăмĕш инкекре çын вилет.

***- Мĕнле тапхăрта ытларах инкексем пулаççĕ? Вĕсене ачасем лекни мĕн чухлĕ шутланать?***

- Автомашинăсемпе çӳреме юратакансен йышĕ çуркуннехи - çуллахи сезон пуçлансан хушăнать. Вĕсен опычĕ сахалрах, çавăнпа аварие лекни те ӳсет. Чи хăрушши, ачасем виleççĕ. Кăçал кăна ачасем аварисене лекнин шайĕ пĕлтĕрхи шайран темиçе хут ытларах.

***- Минханиф Вазыхович, ТР "Çулпа çӳремелли транспортпа усă курмалли тата упрамалли, çулурам сечĕсене тата çӳрессине йĕркелекен техника хатĕрĕсене тытмалли правилăсене пăснăшăн административлă явап тытасси çинчен" Законне кĕртнĕ улшăнусемпе хушусене мĕнле ăнлантарса паратăр.***



- Çак закон июлĕн 28-мĕшĕнче пичетре тухрĕ, паллах, вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн çӳрессин хăрушсăрлăхне япăх витĕм кӳрсе, правилăсене пăснăшăн штраф санкцийĕсем ӳснĕ. Тĕпрен илсен, кусем транспорта ӳсĕрле тытса пыни, çӳрессин хăвăртлăхне ӳстерни, иртсе каймалли, пĕр вырăнтан теприне куçмалли правилăсене пăсни. Палăртатăп, çул çинчи инкексен 90 проценчĕ шăп кăна çак сăлтавсем тĕлĕшпе пулать.

Çĕнĕ правилăсене илес пулсан, ĕлĕкрех транпорт хатĕрĕсене автопарксен тулашĕнче упранăшăн, автотранспортпа хăйĕншĕн усă курнăшăн айăплана пулсан, халь çак функцисене автохуçалăхсен ертӳçисене панă. Водитель удостоверенине çухатнă хыççăн дубликат илнĕ чухне çулпа çӳремелли правилăсем тĕлĕшпе экзамен парассине пăрахăçланă. Гражданин автотранспорта патшалăх техосмотрĕ иртререт е çĕнĕрен регистрацилет пулсан, 4 паллăллă патшалăх номерĕсене 3 паллăллисемпе улăштаратпăр.

***- Минханиф Вазыхович, çул çинче ыйтусем çав тери.нумай, ГИБДД коллективĕнче вĕсем пур-и?***

- Ыйтусем сахал мар, вĕсенчен чылайăшĕ укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çапла, укçа пулманнипе Альметьевск хулинчи СМЭУ светофор объекчĕсене çутă сетĕнчен кăларнă. ГИБДД сотрудникĕсен, талăкра 10-12-шер сехет ĕçлеме тӳр килекенскерсен, ĕç укçи те пысăках мар - пурĕ 400-500 тенкĕ. Çурт-йĕрпе те ыйтусем пур. Çапах та эпир хамăрăн ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшатпăр.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА**
**калаçнă.**

---

Темĕн те пĕлекенсем çыннăн кăмăлне ятран, ашшĕ ятĕнчен, хушаматĕнчен мар, вăл хăш вăхăтра çуралнинчен аванрах палăртаççĕ.

Çуркунне çуралнисем

## Кăмăла ятран çеç пĕлмеççĕ

çирĕп шухăшлă çынсем мар, хăвăрт çиленеççĕ. Хăйсене шанманнипех çут çанталăк панă пултарулăха аталантараймаççĕ. Суйнине ĕнеççĕ, ытларах хăйсене саваççĕ.

Çуллахисем ырă, ăшă чунлă. Чăкăлташма юратмаççĕ. Пулăшу ыйтакана хăйĕн юлашки япалине те пама хатĕр. Çынсем анчах мар, пĕтĕм тавралăх вĕсене çывăх.

Кĕркунне кун çути курнисем çĕкленӳллĕ туйăмлă, вĕсен хушшинче сăвă-калав çыракансем нумай, ăслă-тăнлă. Хирĕçĕве кĕме юратмаççĕ, лăпкăлăха çав тери кăмăллаççĕ.

Хĕллехисем йывăр кăмăллă. Кутăнлашаççĕ, хăйсене ытларах юратаççĕ. Тĕллеве пурнăçлассипе, кăмăл çирĕплĕхĕпе ĕçре хисепре. Пурнăçĕнче вара йывăрлăхсем çук мар: часчас хирĕçеççĕ, кирлĕ-кирлĕ маршăн тарăхаççĕ.




*Юратать-юратмасть...*

## Килти утар



Паллах, вăл пысăк пулмасан та пултарать. 3-4 вĕллене те хăйне май пĕчĕк утар теме пулать. Хурт çемйисем çын сывлăхĕшĕн питĕ усăллă. Вĕлле ларакан вырăнсем чечек шăршипе, пылпа, сĕткенпе, карас шăршипе, прополис бальзамĕпе пуян. Мĕн авалтан чирлĕ çынсене сиплеме утарсене иле-иле кайнă.

Вĕлле хурчĕсем сĕрлени çынна лăплантарать, канлĕх парать, тĕрлĕ йывăр шухăшсене сирсе ярать. Ĕç хыççăн утарта пулни, ун сывлăшĕпе сывлани уйрăмах усăллă. Пыл хурчĕсене пăхса усрани те çынна активлă канма май парать, хăйне евĕр ĕç терапийĕ пулса тăрать. Медиксем сăнанă тăрăх, ахальтен мар хурт-хăмăрçăсен сывлăхĕ çирĕп пулать, вĕсен кăмăлĕ лăпкă, çирĕп, вĕсем нумай çул пурăнаççĕ.

Çапах та хурт-хăмăр çемйисем вĕсен пурнăçне лайăх пелсе тăрсан, тăрăшса пăхсан кăна усă парĕç, савăнтарĕç.

---

## Саламлатпăр!

**Нурлатра пурăнакан юратнă аннене, кукамая, асаннене Наталья Яковлевна ТИМОФЕЕВАНА 90 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.**

**Ачисем, мăнукĕсем.**

## Пĕлтерӳсем

### Сутатпăр:

**К.Маркс урамĕнчи 6-мĕш номерлĕ виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 2-16-59.**

* * *

**Ленинградская урамĕнчи туса пĕтермен çуртри, 2 хутри 3 пӳлĕмлĕ хваттер, пахчаçăсен "Локомотив" юлташлăхĕнче дача участокĕ, çĕнĕ "Урал" мотоблок, Тельман урамĕнче гараж. Телефон: 2-19-77, 8 сехетрен пуçласа 17 сехетчен шăматкунпа вырсарникунсăр пуçне шăнкăравламалла.**

* * *

**40 лет Октября урамĕнчи 6-мĕш номерлĕ çурт, хуçалăх хуралтисем пур, васкавлă. Телефон: 3-04-85.**

* * *

**Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнче лайăх гараж. Адрес: Заводская урамĕ, 26-4, хăть хăш вăхăтра та пыма пулать.**

* * *

**ВАЗ-2106. Адрес: Ахметкино ялĕ, Т.В.Мустафинран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**1,30x1,60 калăпăшлă кĕленче. Телефон: 2-24-03.**

* * *

**6 кĕтеслĕ 10x10 калăпăшлă пура. Адрес: Кивĕ Макçăмъел, Владимир Ильич Смешниковран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 71-2-30.**

* * *

**Гараж хапхисем. Телефон: 5-12-47.**

* * *

**УАЗ-452 (салон). Адрес: Козлов урамĕ, 14-20.**

### Тара илетĕп:

**Хăтлă, сĕтел-пуканлă пĕр е икĕ пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 2-23-27, 20 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

### Тĕрли:

**Августăн 21-мĕшĕнче афган поселокĕ патĕнче çухатнă Николай Иванович Иванов ячĕпе панă документсене тавăрса пама ыйтатăп, парне пулать. Адрес: 60 лет Октября урамĕ, 9-13.**

* * *

**Пианино сутăн илетĕп. Телефон: 5-14-00.**

## Пирĕн чус-хăма Сире хĕле ăнăçлă хатĕрленме май парĕ

**Аксури вăрман хуçалăхĕ чус-хăма (ăвăс) хатĕрлет тата сутать - 1 кубла метрĕн хакĕ 252 тенкĕ, çаплах шăтăрнак, арболит блокĕсем пур. 6 кубла метр ытла заказ парсан, вăрман хуçалăхĕн транспорчĕпе леçсе пама пулать. Бартер ыйтăвĕсем тĕлĕшпе çак телефонсемпе шăнкăравламалла: (244) 2-14-32, 2-11-92 (Аксу поселокĕ).**

## Пырса курма чĕнетпĕр:

***Гагарин урамĕнчи "Чулпан" магазинта ачасем валли "Чебурашка" кафе уçăлнă. 8 сехетрен пуçласа 21 сехетчен ĕçлет.***

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***

***Пирĕн патра кăна!***

***Сеанса пĕтĕмпех анонимлă иртретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!***

***Сипленĕ кун, эрнекун, августăн 28-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу иртретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.***


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3358